Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

70 (7924) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи сентябрь (авăн) уйăхĕн 10-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ял хуçалăхĕ

## Патшалăх пулăшăвĕпе усă курса

Хайсен хушма хуçалăхне тытса пыракансене патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтерессипе Чăваш Республикинче япăх мар пулса пырать. Пирĕн район çыннисем те «Агропромышленность комплексне аталантарасси çинчен» наци проектне пурнăçа кĕртсе пынă май çăмăллатнă условисемпе кредитсем сахал мар илеççĕ, хăйсен хушма хуçалăхне аталантараççĕ.

Кăçалхи январь–август уйăхĕсенче районĕпе пĕтĕмпе çăмăллатнă мелпе 72 миллион та 408 пин тенкĕлĕх 439 кредит панă. Акционерсен «Россельхозбанк» усă обществи 34981 пин тенкĕлĕх 206 кредитпа, акционерсен «Раççей Перекет банкĕ» усă обществи 37427 пин тенкĕлĕх 233 кредитпа тивĕçтернĕ.

Кредит илессипе Катькас, Муркаш, Ярапайкасси ял тăрăхĕсене палăртмалла. Çулталăк пуçланнăранпа ку ял тăрăхĕсенче çăмăллатнă кредит илекенсем 40–47 çын пулнă.

«Агропромышленность комплексне аталантарасси çинчен» наци проектне пурнăçа кĕртме тытăннăранпа вара районĕпе 3490 çынна 549,5 миллион тенкĕлĕх кредитпа тивĕçтернĕ.

**Хамăр инф.**

# Ырă тĕслĕх кăтартать



*Сăн ӳкерчĕкре эсир Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх механизаторне Сергей Ильина куратăр. Хуçалăхра пĕррремĕш çул кăна вăл рулонланă улăма тиенĕ çĕрте вăй хучĕ пулин те, хăйне лайăх енчен кăтартса пама пултарчĕ. Унăн пултарулăхĕ – ытти çамрăк ĕçченсемшĕн те ырă тĕслĕх.*

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Кĕске хыпарсем

## Çуртсене юсаççĕ

Районта нумай хваттерлĕ çуртсенче капиталлă юсав ĕçĕсем тăвасси анлă сарăлнă. Çуртсен сийĕсене пĕтĕмпе 5037,6 тăваткал метр, путвалсене 513 тăваткал метр юсама палăртнă. Çуртсен фасачĕсене 573 тăваткал метр юсаса ăшă тытмалла тумалла. Кĕрхи çанталăк улшăнса тăнине пăхмасăрах ĕçсем чарăнмаççĕ.

## Канашлу иртрĕ

Авăн уйăхĕн 7-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусем ирттермелли залĕнче кĕрхи уй-хир ĕçĕсем епле пынине тишкерсе анлă канашлу иртрĕ. Канашлăва район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов ертсе пычĕ. «Ĕçсене кая хăварнисем сăлтавсене çанталăк условийĕсем çине янине ĕненес те, илтес те килмест. Кăçал пур ĕçсене те агротехникăлла вăхăтра туса иртерме çулсем усă пулчĕç. Çапах та Чапаев яч. хис., «Передовик», Е. Андреев яч. хис., «Путь Ильича» хуçалăхсенче вырман тыр-пул нумайăи паян пите пĕçертет», – терĕ канашлăва усна май район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов. Пуçламăш калаçу вара канашлу тăршшĕпех пулчĕ.

Районти ял хуçалăх предприятийĕсенче кĕрхи уйхирте ĕç-пуç епле пыни пирки пухăннисене район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Калинин тишкерӳллĕ доклад туса пачĕ. Унăн сăмахĕсенчен вырма лаптăкĕсем авăн уйăхне кĕтĕмĕр пулин те Е. Андреев яч. хис., «Передовик», Чапаев яч. хис., «Путь Ильича» хуçалăхсенче нумайăи куç умне тепĕр хут тухрĕ. «Пурнăçланă ĕçсем сахал мар, анчах тумалли те нумай», – пĕтĕмлетрĕ хăйĕн сăмахне Владимир Аркадьевич.

Канашлăва пухăннисем обществăлла выльăхчĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрлессипе кая юлмасăр туса иртермелли ĕçсем çинче те чарăнса тăчĕç. Кунта Чăваш Республикин Патшалăх ветеринари службин ертӳçин – Чăваш Республикин патшалăх тĕп ветеринари инспекторĕн Геннадий Александрович Яковлевăн асăрхаттарăвĕсем çирĕппĕн янăрарĕç. «Сывă выльăхран кăна таса продукци илме пулать. Енчен те эсир ферма тасалăхĕ çине, ăна шуратса дезинфекцилесси пирки паянхи кун ыйтнă пек тимлĕх уйăраймастăр пулсан, тупăш илесси пирки ан та шутлăр», – терĕ вăл фермăсене хĕле хатĕрленĕ чух иккĕмĕш вырăна хăвармалла маррине палăртса.

# Депутатсем канашларĕç

Лару

Сентябрĕн 9-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр тăххăрмĕш ларăвĕ ĕçлерĕ. Депутатсем пăхса тухма кун йĕркине çак ыйтусене кĕртрĕç:

1. Депутатсен Муркаш район Пухăвне пĕр мандатлă 1-мĕш номерлĕ Октябрьски суйлав округĕпе депутат суйлассипе çинчен.

2. Депутатсен районти Пухăвĕн 2010 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнчи С-3/2 № «О районном бюджете Моргаушского района на 2011 год» йышăннăне улшăнусем кĕртесси çинчен.

3. Муркаш районĕн бюджечĕн тивĕçтересĕлĕхне шайлаштарма дотацисем уйăрассине уйрăм çынсен тупăшĕнчен налук илессин нормативĕпе ылмаштарасси çинчен.

4. Депутатсен районти Пухăвĕн 2008 çулхи декабрĕн 5-мĕшĕнчи С-30/4 № О порядке обращения муниципальных служащих Моргаушского района Чувашской Республики за пенсией за выслугу лет, ее назначении и выплаты» йышăннăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

5. Депутатсен районти Пухăвĕн 2009 çулхи сентябрĕн 4-мĕшĕнчи С-34/7 № «О социальных гарантиях выборным должностным лицам местного самоуправления Моргаушского района Чувашской Республики, лицам, замещавшим на постоянной основе должности в местных органах государственной власти (органах местного самоуправления) Чувашской АССР, Чувашской Республики» йышăннăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

6. Депутатсен районти Пухăвĕн 2008 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнчи С-25/3 № «Об утверждении Положения о порядке проведения конкурса на замещение должности главы администрации Моргаушского района Чувашской Республики» йышăннăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

7. Район администрацийĕ çумĕнчи административлă комисси йышне улшăнусем кĕртесси çинчен.

8. Пурлăха Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн харпăрлăхĕнчен Йӳçкасси ял тăрăхĕн харпăрлăхне парасси çинчен.

9. Депутатсен районти Пухăвĕн 2011 çулхи мартăн 18-мĕшĕнчи С-5/3 № «О прогнозном плане (программе) приватизации муниципального имущества Моргаушского района на 2011 год» йышăннăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

10. Наградăлама тăратасси çинчен.

Ларура сӳтсе явнă ыйтусемпе депутатсем тивĕçлĕ йышăнусем турĕç.

**Хамăр инф.**

## Вырма вĕçленет

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем илемлĕ çанталăк условийĕсемпе туллин усă курса йĕпе-сапа пуçланичченех йывăрлăхсене пăхмасăрах хирти тырă-пулăна кĕлете кĕртсе хурассипе тăрăшса ĕçлерĕç. Ĕнерхи кун тĕлне районти тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ 18 хуçалăхра вырма ĕçĕсене вĕçленĕ. Ытти хуçалăхсенче те вырма ĕçĕсем юлашки гектарсем çине куçнă. Хиртен пурĕ 35265 тонна тырă кĕнĕ. Гектар пуçне тивекен вăтам тухăç 24,9 центнер. Чи пысăк тухăç хальлĕхе Суворов яч. хис. хуçалăхра (29,1 центнер), «Бездна» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра (30,0 центнер), С. Сретинскийăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче (31 центнер), «Ударник» хуçалăхра (31,7 центнер), Ильич яч. хис. хуçалăхра (34,9 центнер).

## Кĕр аки çапла пырать

Вырма вĕçленнĕ май хуçалăхсем кĕр аки валли çĕр хатĕрлессипе çанă таварсах ĕçлерĕç. Ĕнерхи куна 4500 ытла гектар çĕр акма хатĕрленĕ. Ку вăл планра пăхнин 67 проценчĕ. Акма çĕр хатĕрлессипе «Путь Ильича» (80 гектар – 160 процент), Суворов яч. хис. (460 гектар – 115 процент), А. Афанасьев хресчен (фермер) хуçалăхĕ (350 гектар – 350 процент), Мичурин яч. хис., «ВаСем», «Колос» хуçалăхсем лайăх ĕçленине палăртмалла.

Хатĕрленĕ çĕрсем çине кĕрхи культурăсем акассипе вара ĕçсем каярах юлса пыраççĕ. Ĕнерхи кун тĕлне хуçалăхсем районĕпе 3100 гектара яхăн çеç кĕртрисем акса хăварма мехел çитерчĕ. Планпа пăхнă чухлĕ е ытларах та акнисем: Суворов яч. хис. (460 гектар – 115 процент), «Колос» общество (150 гектар – 100 процент), А. Афанасьев хресчен (фермер) хуçалăхĕ (300 гектар – 300 процент).

## Çĕр улми кăлараççĕ

Ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче кăçал «иккĕмĕш çăкăр» пĕтĕмпе 1285 гектар йышăнать. Ĕнерхи куна районĕпе ăна 20 гектар ытларах çеç кăларнă. Ку ĕçсене «Ударник», Ильич яч. хис. хуçалăхсемпе «Агросоюз Картофель» обществăра тата хăш-пĕр хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче кăна пуçăннă. Малтанлăха вăтам тухăç гектар пуçне 140,5 центнерпа танлашать.

**А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

# Йывăç лартассипе уйăхлăх иртет

Района тирпей-илем кĕртессипе

Чăваш Республикин Президенчĕн 2005 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче Йывăç кунне иртерме йышăннине пурнăçласа районта çулленех анлă ĕçсем иртеççĕ.

Черетлĕ кĕр кунĕсем çитнĕ май сентябрĕн 7-мĕшĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов авăн уйăхĕн 15 – юпа уйăхĕн 15-мĕшĕнче районта йывăç лартассипе тата ялсене тирпей-илем кĕртессипе уйăхлăх иртерме йышăну турĕ, ĕçсен планне çирĕплетрĕ. Уйăхлăхра эрозипе кĕрешес ыйту тĕп вырăнта. Çак тĕллевпе район администрацийĕн ял хуçалăх пайне вырăнсенчи ял тăрăхĕсемпе, ял хуçалăх предприятийĕсемпе тата организацийĕсемпе калаçса татăлса йывăç лартмалли вырăнсене палăртма тата мĕн чухлĕ лартмаллине пăхса хăварма хушнă. Тĕп тĕллев – эрозипе кĕрешесси.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен асăннă йышăнупа килĕшӳллĕн хăйсен территорийĕсенчи предприятипе организацисен ертӳçисемпе ялсемпе хăйсем вырнаçнă территорисене тирпей-илем кĕртме пĕрле ĕçлемелли пирки калаçнă. Ку ыйту вара кашни ял тăрăхĕнчех малти вырăнта.

Çут çанталăка сыхлассипе ĕçлекен специалист-эксперт Г. Симаков Ильинка лесничествипе пĕрле йывăç калчисемпе тивĕçтерессишĕн яваплă пулса тăраççĕ.

Йывăç лартас уйăхлăх епле пынине район хаçачĕ çутатсах тăрĕ. Кун пирки хыпарсем район администрацийĕн тата ял тăрăхĕсен сайчĕсем çинче те пулмалла.

Асăннă йышăну епле пурнăçланнине тĕрĕслесе тăрассишĕн район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В.Г. Никитин яваплă пулса тăрать.

Мĕнех, уйăхлăха активлă хутшăнса йывăçсем ытларах лартар, хамăр тăван ене хăтлăрах тăвар, тирпейлĕхе мала кăларар. Уйăхлăх ĕçĕ район хаçачĕн страницисенче курăнсах тăрĕ.

**А. БЕЛОВ.**

# Мĕн канăç памасть ял çыннине?

**Сирĕн ыйтусене хуравлатпăр**

***Хаçатăн июлĕн 23-мĕшĕнчи номерĕнче пурăнмалли çурт-йĕр строительствин, коммуналлă услугăсемпе тата çăмăллăхсемпе тивĕçтерессин ыйтăвĕсемпе район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕпе В.Г. НИКИТИНПА хаçат урлă тӳрĕ лини йĕркелесси пирки хыпарланăччĕ. Паян Владимир Германович сирĕн ыйтусене хуравлать.***

__Ыйту:__ ***– Пирĕн Шупашкарти пек пурăнас килет. Унта хваттерсенче пурăнакансем хваттер укçи тӳлеççĕ те подъезд та вĕсен таса, çурт таврашне те дворниксем тирпейлесе тăраççĕ. Пирĕн патра вара çапла калаççĕ: «Подъездне хăвăр çăвăр, çурт йĕри-тавра та хăвăрах тасатăр. Эсир хваттер укçине хулари чухлĕ тӳлеместĕр». Эпир хулари чухлех тӳлеме хатĕр, анчах та сервисĕ те хулари пек пултăр. Енчен те УК хăйĕн тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламасть пулсан урăххине тупăр. Йышăнăр мĕн те пулин. Унсăрăн йĕрке пулас çук.***

**Парковая урамра пурăнакан çамрăксем.**

__Хурав:__ – Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ 2010 çул вĕçĕнче 2011 çулта çуртсене тытса тăнăшăн тата юсав ĕçĕсем пурнăçланăшăн тӳлеме икĕ вариант сĕнчĕ. Пĕрремĕшĕ – çурт йĕри-таврашне тата подъезд площадкисене тасатса пăхса тăнине шута илсе, иккĕмĕшĕ – çурт йĕри-таврашне тата подъезд площадкисене тасатса тăма уйрăм рабочисем йышăнмасăр. Расчетсем çапла пулчĕç: подъезд площадкисемпе çурт çывăхĕнчи территорисене тасатса тирпейлесе тăма ятарлă çынсем тытас пулсан хваттер укçи пĕр тăваткал метршăн 14 тенкĕ те 41 пус, тытмасан 8 тенкĕ те 83 пус тӳлемелле тухрĕ. Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕнче асăннă расчетсене сӳтсе явнă. Тӳлев хакĕсем тăрук нумай ӳссе кайнине кура 8 тенкĕ те 83 пус тарифа çирĕплетнĕ.

Анчах та çурт-йĕр хуçисем хăйсен пĕрлехи пухăвĕнче 14 тенкĕ те 41 пус тарифа çирĕплетме пултараççĕ. Кунпа пĕрлех РФ Пурăнмалли çурт-йĕр кодексĕпе килĕшӳллĕн нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансен кирек хăçан та хăйсен пĕрлехи пухăвĕнче нумай хваттерлĕ çурта тытса-пăхса тăрассин йĕркине улăштарма право пур. Çурт-йĕр хуçисен юлташлăхне йĕркелемелле кăна.

Юсав ĕçĕсене пахалăхлă тата вăхăтра туса ирттересси пĕтĕмпех пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн вăхăтра тӳлесе тăнинчен килет. Пухăннă укçа-тенкĕ чи малтанах ресурссемпе тивĕçтерекен организацисене тӳлеме каять. Юлнă укçа-тенкĕпе юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ тата пурте усă куракан вырăнсене пăхса тăнă çĕрте усă куратпăр. Акă Парковая урамри 2, 3, 3 «а», 5, 5 «а» номерсемлĕ çуртсенчи хваттерсенче пурăнакансем тĕлĕшпе илес пулсан коммуналлă усугăсемшĕн тӳлесе татман парăм 244321,42 тенкĕпе танлашрĕ. Асăннă çуртсене тытса тăма тата юсав ĕçĕсем туса ирттерме каякан уйăхри укça виçи 55137,17 тенкĕпе танлашать. Апла пулсан çак ĕçсене туса ирттерме 4 уйăхшăн укçа-тенкĕ уйăрман.

__Ыйту:__ ***– Мĕншĕн Парковая урамра çуртсене ялăх тăваççĕ? Юнашар хирте çум курăк алхасать. Ачапăча площадкисем тăвассине пăхса хунă-ши?***

__Хурав:__ – Çуртсене проектпа пăхнă пек тăваççĕ. Вĕсем пурте экспертиза витĕр тухнă. Çурт-йĕр тăвас ĕçсене вĕçленĕ хыççăн территорисене тирпейлем кĕртме пăхнă. Парковая урамри 6-мĕш çурта хута ярсан ача-пăча площадки тума палăртнă.

__Ыйту:__ ***– Муркашра гараж кооперативне йĕркелесе хута яма палăртнă-и? Çуртсен картишĕсем автомашинăсемпе тулса ларчĕç вĕт.***

__Хурав:__ – Ыйту усă юлать темелле пулĕ. Хальлĕхе гараж кооперативне йĕркелеме район центрĕнче ирĕклĕ вырăн çук. Муркашра пурăнакансене ăнланатăп, хăçан та пулин ку ыйтăва татса парасах пулать.

__Ыйту:__ ***– Кашни хваттертех шыв шутлакан счетчиксем лартма хистеççĕ-и? Мĕн хак тăрать çак ĕç тата ăна камсем пурнăçлаççĕ?***

__Хурав:__ – 2009 çулхи ноябрĕн 23-мĕшĕнче йышăннă 261-ФЗ номерлĕ Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансем шывпа мĕн чухлĕ усă курнине шутлакан харпăр хăйĕн счетчикĕсене вырнаçтарма тата хута яма тивĕç.

Шывпа мĕн чухлĕ усă курнине палăртакан счетчиксене вырнаçтарассипе тата пломбăлассипе «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх муниципаллă унитарлă предприятийĕ тата чикĕллĕ яваплăхлă «Жилкомсервис» общество ĕçлеççĕ. Материалсене шута илмесĕр счетчик вырнаçтарса панăшăн укçа тӳлемелли тариф 715 тенкĕпе танлашать.

__Ыйту:__ ***– Республика кунĕ умĕн Муркашра йĕрке тăвассипе нумай ĕçлерĕç. Сахал мар выльăх сарайне пăстарчĕç. Хăшĕсем балкон патнех ситнĕччĕ. Çавăнпа пĕрлех тутăх тимĕр гаражсем вырăнтах юлчĕç.***

__Хурав:__ – Йĕрке тăвассипе ĕçлемелле мар. Акă Гагарин урамĕнчи 18-мĕш çурт патĕнче вырнаçтарнă 7 гаража куçартарма пăхнă. Кунта çĕнĕ çурт çĕклеме палăртнă. Анчах та пур гаражсене те Муркашран илсе тухма май çук. Тутăх гаражсен хуçисене вара гаражсене сăрлама хушнă.

__Ыйту:__ ***– Электроэнерги, газ хакĕсем çитес çул мĕн чухлĕ ӳссессине пĕлес килет.***

__Хурав:__ – Тарифсене çитес çул икĕ тапхăрпа ӳстерĕç. Пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх услугисен тарифĕсем ӳсесси пирки республика Президентĕн хула тата районсен администрацийĕсен пуçлăхĕсемпе ирттернĕ канашлура Конкурентлă политикăпа тарифсен республикăри службин ертӳçи Альбина Егорова каласа пачĕ. Унăн сăмахĕнчен çакă паллă. Тарифсем енĕпе ĕçлекен федераллă служба кирлĕ документсене хатĕрлесе çитернĕ ĕнтĕ. Прогноз тăрăх çут çанталăк газĕпе усă курнăшăн тӳлесси ытларах ӳсмелле. 2012 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса газ хакне 5 процент ӳстерме пăхнă. Çав çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вара вăл татах 10,5 процент ӳсĕ.

Çавăн пекех ăшăпа тата электроэнергипе усă курнăшăн та тарифсем хăпарĕç. Çĕнĕ çултан тытăнса электроэнерги 5 процент, апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вара татах 6,5 процент хакланĕ. Ăшă энергине 11 процент хаклатма пăхнă: январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 8 процент тата апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 3 процент.

«Ку вăл Раççейри вăтам кăтарту,– палăртрĕ Альбина Егорова.– Уйрăм регионсем тăрăх тарифсем кăшт пĕчĕкрех е кăшт пысăкрах та пулма пултараççĕ. Раççейри тарифсен федераллă служби палăртакан йĕркелесе пыракан тарифсен виçисем тăваттăмĕш кварталта паллă пулĕç. Прогноз тăрăх вара пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх услугисен пур тарифĕсем те 2012 çулта вăтамран 11 процент ӳсмелле».

__Ыйту:__ ***– Федераци шайĕнчен уйăрса панă укçапа пĕлтĕр çуртсене юсассине чылай ĕçсем пурнăçларĕç. Кăçалхи лару-тăру мĕнлерех?***

__Хурав:__ – Республикăн «Чăваш Республикинче вырнаçнă нумай хваттерлĕ çуртсене капиталлă юсасси çинчен» адреслă программипе килĕшӳллĕн ЧР Министрсен Кабинечĕн 2011 çулхи июлĕн 21-мĕшĕнчи 283-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе кăçал Муркаш районĕнче нумай хваттерлĕ 8 çуртра капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттерме пăхнă. Кусем вĕсем Муркашри Гагарин урамĕнчи 20-мĕш çурт, Октябре 50 çул урамри 40-мĕшпе 44-мĕш çуртсем, Москакассинчи Зеленая урамри 2-мĕш, 4-мĕш, 5-мĕш тата 6-мĕш çуртсем, Мăн Сĕнтĕрти Новая урамри 12-мĕш çурт. Пĕтĕмĕшле капиталлă юсав ĕçĕсен хакĕ – 7865280 тенкĕ. Вăл шутран пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлама пулăшассин фончĕ шучĕпе 4500000 тенкĕ, республика бюджечĕ шучĕпе 1485634 тенкĕ, вырăнти бюджет шучĕпе 1485634 тенкĕ, хваттерсенче пурăнакансен шучĕпе 394012 тенкĕ. Хальхи вăхăтра юсав ĕçĕсене туса ирттерме подрядлă организацисене явăçтарассипе усă конкурс ирттеретпĕр.

Пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн вăхăтра тӳлес енĕпе 185-ФЗ номерлĕ Федераллă саккун условийĕсене пурнăçламан пирки (90 процент) кая юлмасăр капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттермелли çак çуртсене çӳлте асăннă программăна кĕртме май килмерĕ: Юнкă ялĕнчи Центральная урамри 35-мĕш çурт, Мăн Сĕнтĕрти Мичурин урамĕнчи 10-мĕш çурт, Ярапайкассинчи Молодежная урамри 1-мĕшпе 2-мĕш çуртсем.

__Ыйту:__ ***– 2-мĕш номерлĕ котельнăй тавраш çӳпçап айне пулнă. Ма турттарса тухмаççĕ унти тасамарлăха?***

__Хурав:__ – Муркашри 2-мĕш номерлĕ котельнăй таврашĕнчи пысăк калăпăшлă ăпар-тапăрпа çӳпçапа тата ытти вырăнсенчен август уйăхĕнче тиесе ăсатнă. Ăна тиесе ăсатассипе тата утилизацилесси вăтамран 8 пин тенкĕне кайса ларчĕ.

__Ыйту:__ ***– Кантăк тата кĕленче тавраш пухма магазинсем патĕнче ятарлă контейнерсем вырнаçтарасси пирки пĕлтернĕччĕ. Пирĕн магазин патĕнче хăçан пулĕши вăл?***

**Çатракасси ялĕнче пурăнакансем.**

__Хурав:__ – Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш райповĕсем иккĕшĕ те кантăк ванчăкĕсем тата кĕленче тавраш пухма магазинсем патĕнче ятарлă контейнерсем вырнаçтарнă. Çатракасси ялĕнче кун пек контейнер магазинран 20 метрта вырнаçнă.

__Ыйту:__ ***– Йăла каяшĕсене малашне укçалла турттарма тытăнаççĕ тенĕччĕ. Чăннипе ăçта та пулин турттараççĕ-и ăна? Çул хĕррисемпе ăçта килчĕ унта халĕ те çӳпçап тултарнă михĕсем купи-купипе йăваланса выртнине курма пулать. Тасатĕç-и вĕсене хăçан та пулин? Е кун пек хăтланакансене кама та пулин ответ тыттарнă-и?***

__Хурав:__ – Ялсенче, çулсен хĕррисемпе пуçтарăннă çӳп-çапа пухса ăсатас ĕçе ял тăрăхĕн администрацийĕн йĕркелесе туса пымалла. Малашне ку ĕçе çапла майпа йĕркелеме пăхнă. Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ кашни уйрăм хуçалăхпа килĕшӳ тăвать. Каяш турттарнăшăн кашни çын пуçне уйăхсерен 25 тенкĕ тӳлемелле пулать. Çак килĕшӳпе пăхнă май пухăннă çӳп-çапа полигона турттарса тăрĕç.

__Ыйту:__ ***– Çĕнĕ çуртсем тунă чухне автомашинăсем тăмалли вырăнсене те пăхса хумалла. Акă эпир Парковая урамри 2-мĕш номерлĕ çĕнĕ çуртра хваттер илтĕмĕр. Унта туса панă вырăн пĕтĕмпе те 4–5 автомашинăлăх кăна. 40 хваттерлĕ çурт валли ку сахалрах пек туйăнать. Мĕншĕн тесен халĕ хваттер туянакансенчен ытларахăшĕн автомашина пур. Çавăнпа та вĕсем автомашинăсене подъезд умнех лартма тытăнчĕç.***

***Пирĕн çуртпа юнашарах 3 подъездлă тепĕр çурт туса пĕтереççĕ. Çавăнпа та автомашинăсем валли ятарлă уйрăм вырăн тума май çук-ши? Вăл вара подъездсенчен аяккарах пултăр. Паллах ĕнтĕ йĕркеллĕ ача-пăча площадки те кирлех.***

__Хурав:__ – Парковая урамра çĕнĕ çуртсем тунă май автомашинăсем тăмалли вырăнсен (стоянкăсем) те пулмалла, ачапăча площадкисем тăвассине те палăртнă. Ку ĕçсене хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ пурнăçлать.

**Пичете В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**



# Юрă-кĕвĕ ĕçре пулăшать

Çак кунсенче «Передовик» пĕрлешӳллĕ хуçалăхра та вырма ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Уй-хир ĕçченĕсен тăрăшулăхĕнчен чылай килет ăнăçу. Уй-хирте комбайнсен сасси ир пуçласа каçченех кĕрлесе тăрать. Çак ĕçсене туса пыма вара кӳршĕллĕ Çармăс Республикинчен килнĕ комбайнерсем те пулăшаççĕ.

Йĕтем çине машина хыççăн машина тырăпа килсех тăрать. Икĕ йĕтем çинче вăй хуракансем те тăрăшуллă. Вĕсем çапса тĕшĕленĕ тырра вăхăтра аласа пӳлмесене хываççĕ.

– Кăçал тыр-пул тухăçĕ гектар пуçне вăтам шутпа 20 центнертан кая мар,– каласа парать хуçалăх ертӳçи Н.Л. Царев.

Уй-хирте ĕçлекенсене вара яланхи пекех Москакассинчи Культура çуртĕ çумĕнче йĕркеленĕ агитбригада ушкăнĕ хавхалантарсах тăрать. Чăнах та 10–15 минута тăсăлакан концерт программине пăхнă хыççăн ĕçлекенсен кăмăлĕ те çĕкленет. Концертсене ăшă кăмăлпа йышăнаççĕ, татах çавăн пек килсе савăнтарăр тесе ăсатаççĕ.

Художество пултарулăх ушкăнĕн членĕсем те тулли кăмăлпа сыв пуллашаççĕ. Çынна хавхалантарма нумай та кирлĕ мар çав. Ахальтен мар ĕнтĕ темĕнле йывăр самантра та юрă-кĕвĕ çынна хавхалантарнă, кăмăлне çĕкленĕ.

Ăнăçу сунас килет «Передовик» хуçалăх ĕçченĕсене кĕрхи уй-хир ĕçĕсене йĕркеллĕ туса ирттерме.

**Г. ГОЛУБЕВА, Москакассинчи Культура çурчĕн директорĕ.**

**Шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕсенче**

# Пурнăç çулне кунта уçаççĕ

Ача епле çын пуласси, унăн воспитанийĕ, аталанăвĕ унăн шкул çулне çитменхи тапхăрти пурнăçĕпе тачă çыхăннă. Шăпах ĕнтĕ çак вăхăтра ачасен харпăр хăйĕн пахалăх паллисем çирĕпленсе юлаççĕ. Кусем вĕсем ас тăвăм та, шухăшлав та, тимлĕх те, калаçу та тата ыт. те. Çак енсем кайран вĕсем пуçламăш шкулта ăнăçлă ĕлкĕрсе пыма, хăйĕн тантăшĕсемпе тата аслисемпе хутшăнма, кирлĕ информацие туллин илме пĕтĕмпех кирлĕ.

Районта шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсем 29. Вăл шутран ача сачĕсем 15, пуçламăш шкул-ача сачĕсем 5, шкул çулне çитменнисен 7 ушкăнĕ тата шкулсенче шкул çулне çитменнисен валли кĕске вăхăтлăх йĕркеленĕ ушкăнсем.

Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсене 1530 ача çӳрет. Вĕсенчен 94,7 проценчĕ шкул çулне çитмен аслă çулхи ачасем. Çулсеренех шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче вырăн çитменни ытларах та ытларах палăрать. Паянхи куна шкул çулне çитмен ачасен вĕрентӳ учрежденийĕсене çӳреме 1,5 çултан тытăнса 6,5 çулченхи ӳсĕмри 144 ача черетре тăрать. Анализсем çавна кăтартса параççĕ. Уйрăмах шкул çулне çитменнисен кĕçĕнрех ӳсĕм тапхăрĕнчи ачасене ача сачĕсене вырнаçтарасси ыйтусем çуратать.

Ыйтăва татса парассипе ĕçлемеççĕ мар. Ача сачĕсенче вырăнсене компактлăрах йĕркелесе татах 78 вырăн йĕркелеме май килнĕ. Москакасси ял тăрăхĕнчи «Колокольчик» ача садĕнче вара 25 вырăнлăх хушма ушкăн йĕркелеме палăртнă.

Ача сачĕсенче вырăн çитменнин ыйтăвне татса парас тĕлĕшпе палăртса хунă ĕçсем калăпăшлă. Кусем вĕсем шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсене çĕнĕрен тăвасси те, пристройсем тăвасси те. 2012 çулта Муркаш лицейне реконструкцилеме палăртнă. Унта 60 вырăнлăх ача сачĕ пулĕ. 2013 çулта Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи «Мечта» ача садĕнче хушма строительство ĕçĕсем пурнăçласа 60 ача валли вырăн йĕркелемелле, 2014 çулта Москакасси ял тăрăхĕнчи «Колокольчик» ача садĕнче строительство ĕçĕсем пурнăçламалла, 40 вырăн ӳсмалла. Кунпа пĕрлех çав çулах Муркашра 200 вырăнлăх хальхи ача сачĕн çуртне тума тытăнма палăртнă.

**В. ИВАНОВ.**

# Тўрĕ çултан пăрăнма йывăр мар

## Шăпа

Венчет çĕрри тăхăннă манăçми самант, тус-тăванпа пĕрле туй кĕрекинче савăннă вăхăт ĕмĕрлĕхех асра юлать, пĕр-пĕрне ĕмĕр вĕçне тухиччен килĕштерсе те хисеплесе пурăнма тупа туни вара чылай чухне кĕске самантлăх кăна. Çакна чылай тĕслĕх çирĕплетме пултарать. Акă Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи пĕр çамрăк çемьенех илер.

... Пĕр-пĕрин умĕнче тупа тунă самант çамрăк çемьере тахçанах манăçнă ĕнтĕ, малашлăх ĕмĕчĕ те ирхи тĕтре евĕр сўрĕлме ĕлкĕрнĕ. Çапла вара çамрăк мăшăр хушшинче часах хура кушак чупса каçать, тĕрлĕ сăлтавсене пула вĕсем пурнăç сукмакĕпе икĕ еннелле утма тытăнаççĕ, унтанпа вара виçĕ çул иртнĕ ĕнтĕ. Анчах та питĕ шел, пĕчĕк ача аслисене пула тулли çемьере ўссе аталанаймасть, тăван ашшĕн хўтлĕхне туяймасть.

Çуллахи пĕр кунта çамрăк мăшăр хушшинче çапларах синкер пулать, ун пирки инкек тўснĕ хĕрарăм çакăн пек сăнарлать.

– Пĕррехинче эпир хăш-пĕр ыйтăва сўтсе явма паркра тĕл пулма калаçрăмăр. Эрехе малтанах кăмăллаканскер тĕл пулăва ўсĕр килчĕ, – тет хĕрарăм ун чухнехине аса илсе.

Паллах, ўсĕрле пулса иртнĕ калаçу татах та хĕрўленесси каламасăрах паллă. Çавăнпа та хĕрарăм унпа калаçма килĕшмест, каялла кайма тăрать. Анчах та çакăн пек лару-тăру арçын кăмăлне каймасть, вăл паркран инçех пурăнман пирки хĕрарăма хăй килне чĕнет. Хĕрарăм ун сăмахне вырăна хуманран тата ăна хирĕçленине кура арçын вĕчĕрхенет, тарăхăвне те чарайמасть. Нумай шутласа тăмасть, хĕрарăма çўçрен сĕтĕрсе, тĕртсе хăй хуçалăхне илсе çитерет, иккĕмĕш хута улăхтарать. Харкашу хĕрсе пырать, сивĕ сăмах хыççăн сивĕ сăмах тухать. Тискер кайăк туйăмĕ çиеле тухнă арçын ăна пĕр шелсĕр хĕнет, çакăнпа кăна çырлахмасть, сĕтел çи виттине илсе ăна пăвма пуçлать, вĕлерессипе хăратать. Хĕрарăмăн черченкĕ кĕлетки самай хавшанă пирки ăна хирĕç тăраймасть. Çавна курнăран арçыннăн чунĕ шикленет, хăй ирсĕр ĕçне чарать. Кирек епле çын та шанчăкпа пурăнать, ку хутĕнче те çаплах пулнă пулĕ. Хĕрарăм мĕн пур вăйхалне пухать, çăлăнăç шырать, пулăшу ыйтса кăшкăрать. Ун телейнеши полици ĕçченĕсем çав тăрăхра «Мак» операци ирттернĕ, çавăнпа та вĕсем пĕр самантрах çитеççĕ.

Арçын вара çамрăк-ха, апла пулин те çын пурлăхне вăрланăшăн, наркотик хутăшлă япаласене упранишĕн тата ыттишĕн те йĕплĕ пралук леш енче пулма ĕлкĕрнĕ. Унта та вăл хăйне йĕркесĕр тытнипе палăрнă. Нўрĕ стенари кирпĕче сахал мар шутлама тивнĕ пулин те хăй валли ăс-тăн пухайман, тивĕçлĕ утăм тума пултарайман тата ирĕкри пурнăçшăн çунма, ăна хаклама вĕренеймен.

Çапла вара Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче пурăнакан арçын Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 116 статйин 1 пайĕнче тата 119 статйин 1 пайĕнче пăхнă йĕркесене сĕмсĕррĕн пăснă, преступлени тунă. Ку ĕçĕн патшалăх айăплавçи Ю.М. Семенов преступлени енĕпе тивĕçлĕ йышăну тунă. Çитес вăхăтра суд пулмалла, айăплă çынна явап тыттармалла.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

## Çĕнĕ юрă




### Юратса пурнар-и пĕр-пĕрне

1. Ешĕл çамрăк ĕшне хĕрринче
Шăрататать сар кайăк юррине.
Каçĕ лăпкă, тўлек, тĕлĕрет тĕнче –
Юрату çуралать çĕр çинче.
**Хушса юрламалли:**
Юрату ан сўнтĕр ĕмĕрне,
Юратсах пурнар-и пĕр-пĕрне.
Юрату ан сўнтĕр, юрату хĕмлентĕр,
Юратсах пурнар-и пĕр-пĕрне.
2. Эп сăнатăп санăн куççене,
Тĕл пулушăн пит хавас вĕсем.
Эп кĕçех путатăп вĕсен авăрне,
Пăлханса тапаççĕ чĕресем.
**Хушса юрламалли:**
3. Шăнкăр-шăнкăр сас парать çăл куç,
Ăшă çилĕ вĕрчĕ кăнтăртан.
Чун савниçĕм, эсĕ мăшăр çăлтăр куç,
Ман чуна ялан эс ăшăтан.
**Хушса юрламалли:**

## Çул-йĕр çинче

# Тимлĕ пулмасан

Августăн 28-мĕшĕнче каçхине «Атăл» – Гигант – Мăн Сĕнтĕр автоçул çинче Шатраксси ялĕ çывăхĕнче пĕр инкек пулчĕ. 1970 çулта çуралнă, Шупашкар хулинче пурăнакан арçын ВАЗ – 21121 автомашинăпа пулнă. Анчах та çул çаврăмĕнче вăл руле тытса ĕлкĕреймен, кювета анса кайнă. Хыçалти ларкăч çинче ларса пыракан пассажир аманнă, ăна Муркашри тĕп больницăна илсе çитерме тивнĕ.

**С. ИВАНОВ, районти ГИБДД уйрăмĕн пуçлăхĕ, полицин аслă лейтенанчĕ.**

**КУПЛЮ ПУХ ПЕРО**
**новые и старые, мешаные перины и подушки с выездом на дом. Куриное не предлагать. Тел.: 8-962-561-81-15. Иван.**

**БЕТОН, РАСТВОР любых марок. Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778. Песок, ОПГС (гравмасса), щебень. Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440. Доставка миксерами, самосвалами. 32-50.**

для пайщиков *предъявителю объявления +1% по сбережениям*
СБЕРЕЖЕНИЯ
- новые выгодные условия (частичное снятие, пополнение сбережений)
- пенсионерам - льготы

ЗАЙМЫ ЛЬГОТНЫЕ
- **на покупку КРС - до 30 000 рублей**
- **на обучение - до 15 000 рублей**
- на покупку и строительство жилья под материнский капитал
- срок пользования займом на покупку а\м увеличен до трех лет

КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ “СОДРУЖЕСТВО”
Отделение № 3, с.Моргауши
ул.50 лет Октября, д.23, 2 этаж
www.kpksodrugestvo.ru
62-6-86
8-919-673-42-19

В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы,грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады). Питание, проживание предоставляются. Вахта 15/15, 20/20, 30/15, 30/30, 60/30. З/п от 25000 руб. (сдельная). Тел.: 8(8352)23-22-22. 1-5.

* * *

**Требуются рабочие для работы в г. Н. Новгород. Вахтовый метод. Жилье предоставляется. Тел.: 8-929-053-12-77.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:140501:881, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, для ведения прудового хозяйства, площадью 10500 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

пластиковые
ОКНА
*Немецкое качество*
Окна STAR
6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного
скидки до 35%
подробности по телефонам: 8-9603101816
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
*Окна стали дешевле...*

## Погода

| | суббота 10 сентября | | | | воскресенье 11 сентября | | | | понедельник 12 сентября | | | | вторник 13 сентября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +13 | +14 | +15 | +12 | +11 | +13 | +14 | +12 | +11 | +12 | +13 | +11 | +10 | +12 | +14 | +10 |
| Давление мм | 733 | 733 | 730 | 728 | 727 | 726 | 728 | 729 | 731 | 734 | 735 | 736 | 737 | 738 | 740 | 740 |
| Влажность % | 100 | 100 | 94 | 100 | 100 | 100 | 88 | 100 | 100 | 100 | 90 | 98 | 100 | 100 | 81 | 98 |
| Ветер | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю-З | Ю | Ю | Ю-З | С-В | С-В | С-В | С-В | С | С | С | С | С |
| м/сек | 4 | 4 | 3 | 1 | 5 | 1 | 2 | 1 | 4 | 5 | 5 | 6 | 4 | 5 | 5 | 4 |
| Солнце восход/заход | | 06:14 | 19:25 | | | 06:16 | 19:23 | | | 06:18 | 19:20 | | | 06:19 | 19:17 | |
| Луна восход/заход | | 18:16 | 03:57 | | | 18:29 | 05:11 | | | 18:42 | 06:23 | | | 18:55 | 07:35 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | | | | | |

## Пĕлтерўсем. Объявления

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 3-5.**

**Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, бетон, торф, чернозем. С доставкой. Скидки. Тел.: 8-927-668-70-15. 2-13.**

**Продается земельный участок 40 соток под строительство в деревне Верхние Олгаши, все коммуникации рядом с участком. Цена договорная. Тел.: 8-960-301-05-81.**

* * *

**Срочно продаю жилой бревенчатый дом с газовым отоплением и хозяйственными постройками, плодоносящий сад 40 соток в д. Мемеккасы Моргаушского района. Цена договорная. Тел.: 8-905-027-70-87. 2-2.**

* * *

**Куплю корову, бычка, телку, овец. Тел.: 8-905-342-39-43. 7-10.**

* * *

**Продаем солому в тюках, зерно. Тел.: 89278435240. 2-5.**

* * *

**Ремонт бытовых холодильников на дому. Гарантия, качество. Тел.: 8-905-199-83-87, 62-0-45. 2-5.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Тел.: 8-906-131-32-75, 8-927-859-91-55. 3-5.**

* * *

**Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, песок речной, гравмассу, керамзит. Тел.: 8-905-340-07-78. 1-5.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус, цемент, шифер, профнастил (крашеный, оцинкованный). Обращаться: «Рука мастера», с. Моргауши и д. Калайкасы. Тел.: 8-903-346-40-58. 3-5.**

* * *

**Продаем новую квартиру 46,6 кв. м. по адресу: с. Б. Сундырь, ул. Советская, д. 15, кв. 33 (2 этаж). Обращаться по тел.: 8352-58-46-84, сот. 44-85-13.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-343-60-63. 3-8.**

* * *

**Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Услуги экскаватора. Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15. 2-5.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăхсем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57. 1-5.**

* * *

**Ремонт стиральных машин-автоматов с выездом на дом. Парикмахерская «Шарм» оказывает все виды услуг, прокол ушей пистолетом. Любая стрижка 100 руб., укладка в подарок, детская – 50 руб. Обращаться: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 10а (здание бывшей музыкальной школы). Предоставляем услуги шиномонтажа. Работаем без выходных с 8-00 до 20-00 час. Обращаться: с. Моргауши, Кр. Площадь, д. 3 (станция юных техников).Тел.: 8-953-010-21-34.**

* * *

**ООО «Энергосервис» срочно требуются рабочие по изготовлению ж/б изделий. Оплата своевременная, сдельно-премиальная. Реализует по низким ценам печи банные, ж/б кольца для колодцев и выгребных ям, к ним крышки ж/б. Цены ниже рыночных. Тел.: 8(83541)60-2-39, 8-905-342-98-11.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 2-9.**



**ОКОННЫЕ СИСТЕМЫ ENWIN ОКНА от 10500 рублей под ключ. Замер. Доставка бесплатно. Тел.: 37-55-39, 8-927-667-55-39.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:280302:59, местоположение: установлено относительно ориентира, расположенного за пределами участка. Ориентир жилое строение. Участок находится примерно в 60м от ориентира по направлению на юго-восток. Почтовый адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Шатьмапоси, ул.Солнечная, д.10, для ведения огородничества, площадью 413 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

Муркаш райпо коллекивĕ кунта водитель пулса ĕçлекен В.П. Алексеевăн тăван

**АМĂШĔ,**

Вурманкас ялĕнче аслă сутуçă пулса ĕçлекен Е.Г. Алексеевăн

**ХУНЬАМĂШĔ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Нискассинчи пĕтĕмĕшле пĕлў паракан тĕп шкул коллективĕ кунта нумай çул хушши директор пулса ĕçленĕ

**Лев Петрович**
**МАЛЫШЕВ**

нумай вăхăт чирлесе выртнă хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе тарăннăн хурланнине пĕлтерет.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерў ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерў ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.**
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерўсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Волкова А.И.
Пичете панă 09.09.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4357.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерў ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.